**ЕРЭ -2023**

# 2023 çулта 9 класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе патшалăх шайĕнче тытмалли тĕп экзамента изложени çырма хатĕрлесси

*Егорова А.С., Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литературри кафедрин доценчĕ*

# Экзамен ĕçĕн тытăмĕ

Пĕтĕм ĕç 3 пайран тăрать.

1-мĕш пайра – итленĕ текста çывăх изложени çырмалла. Изложенири сăмах шучĕ 70-тен кая пулмалла мар.

# 1-мĕш пай

| 1 | Текста тимлĕ итлĕр те ăна çывăх изложени çырăр. |
|---|---|

Изложенири сăмах шучĕ 70-тен кая пулмалла мар.

Изложение тирпейлĕ, уçăмлă çырăр.

# Изложени тексчĕ

*Шкул картишĕнче паян каллех кĕрхи асамлăхпа киленетĕп. Çил вĕрнипе хурăн çинчен ÿкекен вĕлтĕр-вĕлтĕр сарă çулçăсем вальс çаврăнаççĕ. Шăнкăрав сассипе урокран тухнă ачасем уçă сывлăша васкаççĕ… Сисмесĕрех хамăн юмахри пек телейлĕ те хаваслă ачалăхăма, пĕрремĕш хут шкула кайнине хам ума кăлартăм. Чечек çыххисем йăтнă шурă бантлă, хăмăр кĕпепе шурă саппунлă тантăшсем, вĕлле хурчĕ пек сĕрлекен шкул, илемлĕ те ăслă вĕрентекенсем…*

*Анне пек ырă сунса ăшшăн кĕтсе илнĕ пĕрремĕш вĕрентекене манма пулать-ши мата? Вăл – чи ырри, чи ăсли, чи юратни, чи хакли, чи илемли, чи пултарулли… Пĕрремĕш кунранах учитель пирĕншĕн иккĕмĕш анне пулса тăрать. Çапла, пĕрремĕш вĕрентекен урттернĕ уроксем халĕ те аса илÿ тĕнчинче пурăнаççĕ. Вĕсем пурте ман кун-çула пурнăç урокĕсем пулса таврăнаççĕ, хавхалантараççĕ, çунатлантараççĕ, ĕмĕтсене çывхартаççĕ. Пĕчĕкренех ырăпа усала уйăрма, Тăван çĕр-шыва хаклама, атте-аннене юратма вĕрентекенĕ те, ваттисене хисеплеме хăнăхтараканĕ те, тăванлăхпа туслăх вăйне туйма пулăшаканĕ те пĕрремĕш вĕрентекенех!*

*Çĕре çити пуç тайса сывлăх сунатăп Сире, манăн пĕрремĕш вĕрентекенĕм! Эсир – пирĕн ачалăха илемлетекенĕ, пуянлатаканĕ, пурнăçра хавхалантараканĕ, ăс параканĕ.*

*(С. Никитина çырни тăрăх.)*

# *Изложени текстĕнчи микротемăсем*

| Абзац номерĕ | Микротема |
|---|---|
| 1 | Шкул картишĕ, кĕрхи çанталăк... Пĕрремĕш хут шкула кайнине аса илетĕп. |
| 2 | Пĕрремĕш вĕрентекен иккĕмĕш анне пекех. Вăл ырăпа усала уйăрма, Тăван çĕр-шыва хаклама, атте-аннене юратма вĕрентет, ваттисене хисеплеме хăнăхтарать, тăванлăхпа туслăх вăйне туйма пулăшать. |
| 3 | Тавах Сире, пĕрремĕш вĕрентекенĕм! Эсир – пирĕн ачалăха илемлетекенĕ, пуянлатаканĕ, пурнăçра хавхалантараканĕ, ăс параканĕ. |

# Текстпа пĕрремĕш хут паллашни

- Текста тимлĕн итлемелле, содержанине ас туса юлма, текстри сюжет йĕрне çирĕп тытса пыма тăрăшмалла.
- Текста çывăх план е тĕрев конспекчĕн пайĕсене çырса хума юрать. Чи шанчăклă мел – вуланă текста ас туса юлма тăрăшни.
- Текста мĕнле стильпе çырнине, темине, тĕп шухăшне палăртма тăрăшмалла, ума тăратнă проблема çине автор мĕнле пăхнине асăрхамалла. Çавсем çине таянса ансат план йĕркелемелле.

# Текстпа иккӗмӗш хут паллашни

Текст миҫе пайран тăнине, тӗп шухăша палăртакан сăмахсене, пӗр абзацран теприн патне куҫма пулăшакан сăмахсемпе предложенисене ҫырса пыма юрать. Калаҫу тата стиль тӗлӗшӗнчен уйрăмах куҫа курăнакан сăмахсене ҫырса хăвармалла. Манерӗ енчен тӗп вырăнта мӗнле пуплев (калав, сăнлав, ăслав) тăнине ăнланмалла.

# Шута илĕр!

- Изложени оригиналпа туллин тӳр килме тивĕçлĕ.
- Оригиналта çуккине хушса çырма юрамасть.
- Текстăн стильне сыхласа хăвармалла.
- Илемлĕх, кăмăл-туйăм мелĕсем мĕнле палăрнине шута илмелле.
- Сăмах пĕлтерĕшне контекстра тишкермелле.
- Сăнарлă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене шута илмелле.
- Текстăн темипе тĕп шухăшне тĕрĕс тупмалла.



# Çырса пырăр!

## Текстăн тĕп сăмахĕсене çырса пырăр

- пайăр ятсене;
- пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсене;
- фактсене;
- датăсене;
- час-час тĕл пулакан сăмахсене;
- синонимсемпе антонимсене.

Вĕсем текстăн тĕп шухăшне уçса пама пулăшĕç.

# План тăвасси

Кашни пункт валли фактсем хатĕрлес пулать.

– текстра чи пĕлтерĕшли мĕн иккенне палăртăр;

– чи кирлине автор мĕнле майпа кăтартнине пĕлĕр; автор сăмахĕсемпе усă курса тезиссем хатĕрлĕр;

– текстăн тĕп тезисне уйăрăр;

– текстăн кӳртĕм пайне тупăр;

– абзацсене е шухăшсене тĕпе хурса тунă планăн пункчĕсене çырса хурăр;

– пĕтĕмлетӳре мĕн каламалли çинчен шухăшлăр.

# Асра тытăр!

***Изложени текстне 1-мĕш сăпатран çырнă пулсан – ачан та 1-мĕш сăпатран çырмалла.***

***Апла тумасан – факт йăнăшĕ.***

# Тĕрев конспекчĕ çырасси

Хута вертикаль йĕрпе çурмалла уйăрмалла.

Хут листин пĕр енне текста ***пĕрремĕш хут вуланă*** хыççăн (е вуланă вăхăтрах) тĕрев сăмахĕсем çырса пыраççĕ.

Тепĕр енне – ***иккĕмĕш хут вуланă*** хыççăн (е вуланă вăхăтрах), сиктернĕ сăмахсемпе предложенисене хушаççĕ, текст авторĕн витĕмлĕ сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсене çырса хураççĕ. Йăнăшсем пулсан – тӳрлетеççĕ.

# Асра тытăр!

***Текста кĕскетнĕ чух***

– микротемăсене;

– текстăн тĕп шухăшне;

– автор аргуменчĕсене;

– автор пĕтĕмлетĕвне;

***кăларса пăрахма юрамасть!***

# Изложени çырма вĕрентесси

***Кĕскетмелли мелсем***

- **Тĕп мар информацие кăларса пăрахни**

Тĕп (пит кирлĕ) информаци: текстăн тĕп шухăшĕ

- **Улăштарса пĕтĕмлетни (обобщение с заменой)**
- **Пĕрлештерни (слияние)**

# Изложение хакламалли критерисем

| И1 | Изложенире оригинал текстăн содержанийĕ палăрни | |
|---|---|---|
| | Текст содержанийĕ пĕртте пăсăлман, 1-мĕш таблицăра палăртнă пур микротемăна та уçса панă | 2 |
| | Текстăн тĕп содержанине уçса панă, анчах пĕр микротемăна сиктерсе хăварнă е хушса панă. | 1 |
| | Текстăн тĕп содержанине уçса панă, анчах пĕр микротемăран ытларах сиктерсе хăварнă е хушса панă. | 0 |

# Изложение хакламалли критерисем

| | | |
|---|---|---|
| **И2** | **Оригинал текстăн содержанине уçса панă чухнехи шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ** | |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, логика йăнăшĕсем çук; текста абзацсене пайланă чухне йăнăшсем çук. | 2 |
| | Ĕçре шухăш туллилĕхĕ, пуплев çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1 пур, тата/е абзацсем тунă чух 1 йăнăш кайнă. | 1 |
| | Ĕçре шухăш çыхăнулăхĕ палăрать, анчах логика йăнăшĕ 1-рен ытла тунă, тата/е абзацсем тунă чух 2 йăнăш кайнă. | 0 |

# Изложение хакламалли критерисем

| ИЗ | Пуплев тĕрĕслĕхĕ, уçăмлăхĕ | |
|---|---|---|
| | Шухăша тĕрĕс те ăнланмалла уçса пама шкул ачи йышлă лексикăпа, тĕрлĕ грамматика хатĕрĕсемпе усă курнă. | 2 |
| | Ачан сăмах пуянлăхĕ пур, анчах пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курни сисĕнет. | 1 |
| | Сăмах çӳпçи чухăн, пĕрешкел грамматика хатĕрĕсемпе вĕçĕмсĕр усă курнă | 0 |

# Вăхăтпа пĕлсе усă курăр!

Пĕтĕм экзаменăн 235 минутĕнчен **80-ăшĕ** изложени валли каять.

**Изложени** çырма – **70** минут:

**5** минут – **план** тума,

**50** минут – **черновик** çырма;

**15** минут – изложение **шурă хут** çине куçарса çырма.

Текста вулама тата ăнланса илме панă вăхăт – **10** минут. Ку е вăл ĕçе 5–10 минут маларах е каярах пĕтерсен те пĕтĕм экзамен 240 минут картинчен тухмалла мар.

# Экзаменра ăнăçу сунатпăр!